26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАЙ
1
ШĂМАТКУН
92(6329) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗĔ

1943 çулти майăн 1-мĕшĕ. *№ 195.* *Мускав хули.*

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем, рабочисемпе работницăсем, хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсем, интеллигентла ĕçри çынсем! Нимĕç пусмăрçисен пусмăрĕ айне вăхăтлăха лекнĕ тăвансем!

Совет Правительстви тата пирĕн большевикла Парти ячĕпе Сире майăн 1-мĕш кунĕнче ырă сывлăх сунса саламлатăп!

Пирĕн çĕршыври халăхсем майăн 1-мĕш кунне Отечественнăй вăрçăн хаяр кунĕсенче кĕтсе илеççĕ. Вĕсем хăйсен кунçулне Хĕрлĕ Çара шанса пачĕç, çапла туса вĕсем йăнăшмарĕç. Совет воинĕсем Тăван çĕршыва хÿтĕлеме кăкăрпа тăчĕç. Акă ĕнтĕ вĕсем Совет Союзĕнчи халăхсен чыслăхне тата никама пăхăнманлăхне икĕ çула яхăнах хÿтĕлесе тăраççĕ.

1942—43 çулсенчи хĕллехи кампани вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çар Гитлер войскисене пысăк поражнисем тÿстерчĕ, тăшманăн çыннисемпе техникине питех те нумай пĕтерсе тăкрĕ, Сталинград патĕнче тăшманăн икĕ армине хупăрласа илсе пĕтерсе тăкрĕ, тăшманăн 300 пин ытла салтакĕпе офицерне тыткăна илчĕ тата советăн çĕршер хулисемпе пиншер ялĕсене нимĕç пусмăрĕнчен ирĕке кăларчĕ.

Хĕллехи кампани Хĕрлĕ Çарăн тапăнса пырас вăйĕ ÿснине кăтартса пачĕ. Пирĕн войскăсем нимĕççене вĕсем 1942 çулта çулла тытса илнĕ территорисенчен хĕссе кăларчĕç кăна мар, тата тăшман аллинче çулталăк çурра яхăн пулнă чылай хуласемпе районсене те йышăнса илчĕç. Хĕрлĕ Çар тапăнса пынине сирсе яма нимĕçсем вăй çитерейменрĕç.

Харьков районĕнче фронтăн хĕсĕк участокĕнче контрнаступлени тума та гитлерла командованин ирĕксĕрех Хĕвеланăç Европăран çĕнĕ вăтăр дивизие ытла куçарса килмелле пулчĕ. Нимĕçсем Харьков районĕнче совет войскисене хупăрласа илсе пирĕн войскăсемшĕн «нимĕçле Сталинград» тума шутланă. Анчах та гитлерла командовани Сталинградшăн тавăрма хăтланни путланса ларчĕ.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн союзниксен çĕнтерÿллĕ войскисем Ливипе Триполитани районĕнче Италипе Германи войскисене çĕмĕрсе тăкрĕç, çав районсене тăшмансенчен тасатрĕç те халĕ вĕсене Тунис районĕнче малалла çĕмĕрсе пыраççĕ, Англипе Америкăн паттăр авиацийĕ вара Германин тата Италин çарпа промышленность центрĕсене аркатса тăкмаллах пыра-пыра çапать, Европăра итальянецсемпе нимĕççен фашисчĕсене хирĕç иккĕмĕш фронт пулса тăрассине систерет.

Çапла вара, тăшмана хĕвелтухăç енчен Хĕрлĕ Çар пырса çапни хĕвеланăç енчен пирĕн союзниксен войскисем пырса çапнипе вăрçă вăхăтĕнче чи малтанхи хут пĕрлешсе, пĕрле çапни пулса тăчĕ.

Çак мĕнпур обстоятельствăсем, пĕрле илсен, гитлерла вăрçă машинине тĕпренех кисретрĕç, пĕтĕм тĕнчери вăрçă мĕнле пулса пырассине улăштарчĕç тата гитлерла Германие çĕнтерме кирлĕ условисене туса пачĕç.

Çаксене пула тăшманăн ирĕксĕрех хăйĕн лару-тăрăвĕ чылай начарланнине йышăнмалла пулчĕ, вăл вăрçă кризисĕ çинчен нăйкăшма тытăнчĕ. Чăн та, тăшман хăйĕн начар лару-тăруне «тотальнăй» мобилизаци çинчен шавланипе витме хăтланать. Анчах та фашистсен лагерĕ чăннипех те пысăк кризиса лекнине нимĕнле шав та витсе хума пултараймасть.

Фашистсен лагерĕнчи кризис, чи малтан, çакăнта пулать: тăшманăн малтан çиçĕмле вăрçă тума шутланине ирĕксĕрех тата уççăнах пăрахăça кăлармалла пулчĕ. Тăшмансен лагерĕнче халĕ ĕнтĕ çиçĕмле вăрçă çинчен калаçмаççĕ,—çиçĕмле вăрçă çинчен кăшкăрашса сÿпĕлтетесси вырăнне халĕ ĕнтĕ вĕсем вăрçă ирĕксĕрех вăраха каясси çинчен салхуллăн нăйкăшаççĕ. Нимĕççен фашистла командованийĕ халиччен çиçĕмле наступлени тактикипе каппайнă пулсан, халĕ ĕнтĕ вăл тактикăна аяккалла сирсе пăрахнă, нимĕç фашисчĕсем халĕ ĕнтĕ çиçĕмле наступлени туса ирттернипе е туса ирттерессипе мар каппаяссĕ. Англи

войскисем Çурçĕр Африкăра çавăрса илмелле пырса çапассинчен е совет войскисем Демянск районĕнче çавăрса илессинчен çăмăллăн шăвăнса тухма пултарнипе каппаяççĕ. Фашистсен пичечĕ нимĕç войскисем фронтран тарса тухма пултарни çинчен тата хĕвелтухăç е Тунис фрончĕн пĕр-пĕр участокĕнче çĕнĕ Сталинградран хăтăлса юлма пултарни çинчен каппайса пĕлтернисемпе тулса ларнă. Гитлерла стратегсен урăх нимĕнпе те мухтанма çук пулмалла ĕнтĕ.

Фашистсен лагерĕнчи кризис, иккĕмĕшĕнчен, çакăнта пулать: фашистсем мир çинчен час та часах калаçма тытăнаççĕ. Ютçĕршыв пичетĕнче пĕлтернисем тăрăх каласан, çакăн пек выводсем патне пыма пулать: Англипе США Совет Союзĕнчен уйăрăлас пулсан, вĕсем Англипе тата США-па мир тунă пулĕччĕç, е, пачах урăхла, Совет Союзĕ Англипе США-ран уйăрăлас пулсан, Совет Союзĕпе мир тунă пулĕччĕç. Хăйсем вĕçне çитиччен ултавлă пулса тăнипе, нимĕç империалисчĕсем союзниксене хăйсен аршăнĕпе виçме сĕмсĕрленеççĕ, вĕсем союзниксенчен хăшĕ те пулин вăлтана çакланассине шанаççĕ. Паллах, нимĕçсем лайăх пурнăçа кура мар мир çинчен сÿпĕлтетеççĕ. Фашистсен лагерĕнче мир çинчен калаçни вĕсем йывăр кризиса лекни çинчен кăна каласа парать. Европăна юнпа шÿтернĕ тата виселицăсемпе тултарнă нимĕççен фашистла лагерĕнчи империалистла вăрă-хурахсемпе мĕнле мир çинчен калаçу пулма пултарать-ха? Гитлерла çарсене пĕтĕмĕшпех çапса аркатни кăна тата гитлерла Германия пĕр сăмахсăр парăнни кăна мир патне илсе çитересси куçкĕретĕнех паллă мар-и-ха ĕнтĕ? Нимĕçсемпе итальянецсен фашистла лагерĕ йывăр кризиса лекнине тата хăйсем катастрофа тÿсесси умĕнче тăнине туйнипе мар-ши ĕнтĕ нимĕç фашисчĕсем мир çинчен сÿпĕлтетеççĕ?

Çаксем вĕсем, паллах, гитлерла Германи халех ĕнтĕ катастрофăна кĕрсе ÿкнине пĕлтермеççĕ. Çук, пĕлтермеççĕ. Гитлерла Германипе унăн çарĕ кисренчĕç тата кризиса лекрĕç, анчах вĕсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкман-ха. Катастрофа хăйне-хăех, хăй юхăмĕпе килĕ тесе шутлани айванла пулнă пулĕччĕ. Гитлерла Германи катастрофăна лекни факт пулса тăтăр тесен, Гитлер çарне юлашки 5—6 уйăх хушшинче пырса çапнă пек, хĕвеланăç тата хĕвелтухăç енчен татах икĕ-виçĕ хут хăватлăн пыра-пыра çапни кирлĕ.

Çавăнпа та Совет Союзĕнчи халăхсен тата вĕсен Хĕрлĕ Çарĕн, çавăн пекех пирĕн союзниксемпе вĕсен çарĕсен те, гитлерла ирсĕрсене пĕтĕмĕшпех çĕнтерессишĕн хаяр та йывăр кĕрешÿ туса пымалла пулать. Çак кĕрешÿ вĕсене пысăк жертвăсем тÿсме, питех те чăтăмлă пулма, тимĕр пек çирĕп пулма хушать. Вĕсен хăйсен пĕтĕм вăйĕсемпе майĕсене тăшмана çĕмĕрсе тăкас ĕç валли мобилизацилемелле тата çапла майпа мир тума çул хывса хатĕрлемелле.

Юлташсем! Совет халăхĕ хăйĕн Хĕрлĕ Çарĕшĕн калама çук вăйлăн тăрăшать. Вăл Совет çĕршывĕн вăрçăри вăй-хăватне малалла ÿстерсе пымашкăн пĕтĕм вăйне пама хатĕр тăрать. Тăватă уйăхран та сахалтарах вăхăт хушшинче Совет Союзĕнчи халăхсем Хĕрлĕ Çар фондне 7 миллиард тенкĕ ытла хыврĕç. Çакă ĕнтĕ нимĕççене хирĕç пыракан вăрçă Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем туса пыракан чăннипех те пĕтĕм халăх вăрçи пулса тăнине тепĕр хут кăтартса парать. Рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем, вăрçă кăларса тăратнă йывăрлăхсене çирĕппĕн те паттăррăн тÿссе ирттерсе, предприятисемпе учрежденисенче, транспортра, колхозсемпе совхозсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Анчах та фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă Хĕрлĕ Çара орудисем, танксем, самолетсем, пулеметсем, автоматсем, минометсем, боеприпассем, снаряжени, апат-çимĕç татах та ытларах парса тăма хушать. Апла пулсан, рабочисем, колхозниксем, пĕтĕм совет интеллигенцийĕ фронт валли икĕ хут нумайрах вăй хурса ĕçлени кирлĕ.

Пирĕн мĕнпур çынсемпе пĕтĕм учрежденисем тылра пĕр-перинпе килĕштерсе, лайăх сехет механизмĕ пек, тикĕс ĕçлени кирлĕ. Аслă Ленин хушса хăварнине аса илерха: «ВĂРÇĂ ПУРПĔРЕХ ПУÇЛАНЧĔ ПУЛСАН, ЙĂЛТАХ ВĂРÇĂ ВАЛЛИ, КИРЕК ТЕ МĔНЛЕ СÿРĔК ĔÇЛЕНИНЕ ТАТА ВĂЯ ХУРСА ĔÇЛЕМЕННИНЕ ВĂРÇĂ ВĂХĂТĔНЧИ ЗАКОН ТĂРĂХ АЙАПЛАМАЛЛА».

Хамăрăн халăх шанни çине тата тăрăшни çине ответлесе, Хĕрлĕ Çарăн тăшмана татах та çирĕппĕнрех çапмалла, нимĕç захватчикĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пымалла, вĕсене совет çĕрĕ çинчен пĕр чарăнмасăр хăваламалла. Хĕрлĕ Çар вăрçă вăхăтĕнче вăрçă туса пырас тĕлĕшпе пуян опыт туянчĕ. Çĕршер пин боецсем хăйсен хĕçпăшалне питех те лайăх вĕренсе алла илчĕç. Нумай командирсем войскăсене çапăçу хирĕнче пĕлсе ертсе пыма вĕренсе çитрĕç. Анчах та çакăнпа лăпланса ларни аслă мар ĕç пулнă пулĕччĕ. Боецсем хăйсен хĕçпăшалĕпе лайăх усă курма вĕренсе çитмелле, командирсем çапăçăва ертсе пырас ĕçĕн мастерĕсем пулса тăмалла. Анчах çакă та сахал-ха.

Вăрçă ĕçĕнче, уйрăмах кучухнехи вăрçă ĕçĕнче, вырăнта тăма юрамасть. Вăрçă ĕçĕнче чарăнса тăни вăл — кая юлассине пĕлтерет. Кая юлнисене, паллă ĕнтĕ — хĕнеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ чи кирли халĕ çакă пулса тăрать: пирĕн ПĔТĔМ Хĕрлĕ Çарăн хăйĕн çапăçури ăсталăхне кунран кун лайăхлатса пымалла, Хĕрлĕ Çарăн МĔНПУР командирĕсемпе боецĕсен вăрçă опытне вĕренмелле, çĕнтерÿ ĕçĕ мĕнле ыйтать, çавăн пек çапăçма вĕренмелле.

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем!

Сире майăн 1-мĕш кунĕ ячĕпе саламласа тата ырă сунса, çакăн пек **ПРИКАЗ ПАРАТĂП:**

1. Мĕнпур боецсен — пехотинецсен, минометчиксен, артиллеристсен, танкистсен, летчиксен, саперсен, связистсен, кавалеристсен — хăйсен çапăçури мастерлăхне ывăнма пĕлмесĕр лайăхлатса пымалла, командирсен приказĕсене, уставсемпе наставленисем ыйтнисене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пымалла, дисциплинăна çирĕп тытса пымалла, организованноçпа йĕркелĕхе тытса пымалла.

2. Мĕнпур тĕрлĕ войскăсен командирĕсен тата общевойсковой командирсен — войскăсене ертсе пырас ĕçĕн мастерĕсем пулмалла, пур тĕрлĕ войскăсем те пĕрлешсе кĕрешессине пĕлсе организацилемелле тата вĕсене çапăçура ертсе пыма пĕлмелле. Противника тĕпчесе пĕлмелле, разведкăна — çарăн хăлхисемпе куçĕсене—лайăхлатмалла. Унсăрăн тăшмана тÿррĕн те витĕмлĕн çапма çуккине асра тытмалла. Войскăсен штабĕсен ĕç культурине ÿстермелле, Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе соединенийĕсен штабĕсем войскăсене тытса пыракан кăтартуллă органсем пулмалла тăвас пулать. Войскăсен тылĕсен ĕçне кучухнехи вăрçă ыйтнă виçене çити çĕклемелле. Войскăсене боеприпассем, снаряжени, продовольстви туллин те вăхăтра парса тăнинчен çапăçу операцийĕсем мĕнле вĕçленесси килнине çирĕп асра тытмалла.

3. Пĕтĕм Хĕрлĕ Çарăн — хĕллехи çапăçусен çитĕнĕвĕсене çирĕплетмелле тата малалла аталантармалла, хамăрăн çĕрĕн пĕр пусăмне те тăшмана памалла мар, нимĕççен фашистла захватчикĕсене хирĕç татăклă çапăçăва тухма хатĕр тăмалла. Оборонăра пирĕн çарăн боецĕсене тивĕçлĕ чăтăмлăхпа çирĕплĕхе кăтартмалла. Наступленире — ĕçе хăюллăн татса пама пултарнине, войскăсене пĕр-перинпе тĕрĕс килĕштерсе ертсе пыма пултарнине, çапăçу хирĕнче тăшмана çавăрса илсе пĕтерсе тăкнипе вĕçленекен хăюллă маневр тума пултарнине кăтартса памалла.

4. Партизансемпе партизанкăсен, — тăшман тылĕсене, çулйĕрĕсене, çар склачĕсене, штабĕсемпе предприятийĕсене хăватлăн пыра-пыра çапмалла, тăшманăн çыхăну линийĕсене аркатса пымалла. Тăшман тытса илнĕ районсенчи совет халăхĕн анлă сийĕсене ирĕклĕхшĕн пыракан активлă кĕрешĕве явăçтармалла, çапла вара совет гражданĕсене нимĕç чуралăхне хăваласа каяссинчен тата вĕсене гитлерла тискер кайăксем пĕтерсе тăкассинчен çăлса хăвармалла. Хамăрăн арăмсемпе ачасен, аннесемпе аттесен, пиччесемпе шăллăмсен, аппасемпе йăмăксен юнĕпе куççулĕшĕн нимĕç захватчикĕсене пĕр хĕрхенмесĕр тавăрса пымалла. Гитлерла ирсĕр пусмăрçăсене хирĕç пыракан кĕрешÿре Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйпа пулăшмалла.

Юлташсем!

Пирĕн войскăсем аркатмаллах пыра-пыра çапнин хăватне тăшман тутанса пăхрĕ ĕнтĕ. Хĕрлĕ Çар, хамăрăн союзниксен çарĕсемпе пĕрле, фашистла тискер кайăкăн çурăм шăммине çапса хуçас вăхăт çывхарса килет.

СЫВĂ ПУЛТĂР ПИРĔН МУХТАВЛĂ ТĂВАН ÇĔРШЫВ!

СЫВĂ ПУЛТĂР ПИРĔН ПАТТĂР ХĔРЛĔ ÇАР!

СЫВĂ ПУЛТĂР ПИРĔН ПАТТĂР ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔ!

СЫВĂ ПУЛЧЧĂР ПИРĔН ХАСТАР ПАРТИЗАНСЕМПЕ ПАРТИЗАНКĂСЕМ!

НИМĔÇ ЗАХВАТЧИКĔСЕНЕ — ВИЛĔМ!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

Май уявĕ ячĕпе Шупашкарта пулнă чаплă лару

Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен уявĕ—майăн 1-мĕшĕ ячĕпе ĕнер Шупашкарта, Советсен Çуртĕн ларусен залĕнче, хулари партипе совет тата общественлă организацисен чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Чаплă ларăва ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ М. Романова юлташ уçрĕ.

Президиумра — ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Белков, Ахазов, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева, ВКП(б) Обкомĕпе Хула комитечĕн бюро членĕсем, правительство членĕсем, хулари советпа общество тата çар организацийĕсен представителĕсем.

Пысăк хавхаланупа, тăвăллăн алă çупса, хисеплĕ президиума Сталин юлташ пуçпулса тăракан ЦК ВКП(б) Политбюро составне суйларĕç.

Майăн 1-мĕшĕ çинчен — ĕççыннисен кĕрешÿри вăйсене пăхса тухмалли кунĕ çинчен ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Т. Ахазов юлташ доклад туса пачĕ.

Халăхсен аслă çулпуçĕ, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне яма çырнă çырăва чаплă лару пĕр шухăш-кăмăллă пулса йышăнчĕ.

Чаплă лару хыççăн концерт пулчĕ.

Совет Союзĕн Маршалне С. М. Буденный юлташа, М. С. Хозин генерал-полковнике тата Социализмлă Ĕç Геройне Ж. Я. Котина орденсем пани

Апрелĕн 29-мĕшĕнче Кремльте СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Совет Союзĕн Маршалне С. М. Буденный юлташа, вăл çуралнăранпа 60 çул тултарнă ятпа тата Совет государстви умĕнче тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн наградăланăскерне, Ленин орденне панă.

Боевой операцисене ăнăçлăн тата хăюллăн ертсе пынăшăн наградăланă М. С. Хозин генерал-полковнике пĕрремĕш степеньлĕ Суворов орденне панă.

Танксем туса кăларас тата танк дизелĕсемпе бронекорпуссем туса кăларас тĕлĕшпе Правительство заданине кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Социализмлă Ĕç Геройне, танковăй промышленность Халăх Комиссарĕн Заместительне Ж. Я. Котина Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ панă. (ТАСС).

Радюк колхозникĕн ырă ĕçĕ

Дон çинчи Ростов, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Богаевски районри Красный ятлă хутора фронт командованийĕн представителĕ килчĕ. Вăл Правительство ячĕпе Платон Прокопьевич Радюк колхознике Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, унăн арăмне—Марфа Корнеевăна «За боевые заслуги» медаль пачĕ.

Хĕллехи çапăçусен вăхăтĕнче, пирĕн чаçсем вăхăтлăха каялла чакнă вăхăтра, вĕсем аманнă 22 боецпа командира пухса илнĕ. Сурансене çуса çыхнă, апат çитернĕ. Нимĕçсем хутора кĕрсен, çăмăлрах аманнă 12 боецпа командир продуктсем илнĕ те вăрттăн фронт линийĕ урлă каçнă. Вунă боецпа командир пÿртрех юлнă. Радюкпа унăн арăмĕ вĕсене тăхăр кун хушши пытарса усранă. Вĕсем аманнă боецсемпе командирсене хăйсен продукчĕсен запасĕн юлашкийĕсене панă, мĕнпур простынясене, алшăллисене, аялтан тăхăнмалли кĕпесене бинтсем тунă çĕре янă.

УЙĂХРИ ПЛАНА 7 КУН МАЛАРАХ

Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва пуçарнă заводăн, Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен заводăн коллективĕ уйăхри плана 7 кун маларах—апрелĕн 23-мĕшĕнче пурнăçларĕ. Апрелĕн 30-мĕшĕ тĕлне завод уйăхри плана 110 процент тултарчĕ.

Апрельти плана чи малтан Кинзбургский юлташăн Хĕрлĕ ялавлă цехĕ тултарнă.

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту завод коллективне Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 12-мĕш уйăхĕнче производствăллă пысăк çĕнтерÿ тума майсем туса пачĕ.

Совет Союзĕн Геройĕ гварди капитанĕ М. Е. ЕФИМОВ юлташ

Герой ҫырăвĕ

Сывă-и хаклă землякĕсем, Самушкино колхозникĕсем!

Эпĕ сирĕн пата пĕтĕм чун-чĕререн хĕрӳллĕ салам яратăп. Сире сывлăхлă та телейлĕ пулма, Тăван ҫĕршыва усă кӳрессишĕн ĕҫ фронтĕнче ывăнма пĕлмесĕр ĕҫлеме ăнăҫу сунатăп.

Пĕтĕм совет халăхĕ ҫирĕммĕҫҫĕмĕш уйăх ĕнтĕ ирсĕр фашизма хирĕҫ кĕрешет. Хĕрлĕ Ҫар гитлерла вăрă-хурахсене хирĕҫ этемлĕхĕн историйĕнче курман паттăр ҫапăҫусем туса пырать. Гитлерла войскăсене пирĕн Хĕрлĕ Ҫар хăватлăн пыра-пыра ҫапрĕ. Вăл иртнĕ хĕлре 1.500 километр ытла ҫухалăпа ...

Вăрҫăн отечественнăй тапхăрĕ—нимĕҫ оккупанчĕсене хамăр тăван ҫĕршывран массăллăн хăваласа кăларас тапхăр пуҫланчĕ. Анчах тăшмана тăван ҫĕршывран тĕпĕ-йĕрĕпех хăваласа кăларма пысăк вăйсем кирлĕ. Тăшман хăйĕн хирĕҫ тăракан пĕр метр ҫĕре те ҫапăҫсăр памасть. Тăшман хăшпĕр участоксенче, хăйĕн вăйĕсене тепĕр хут пухса йĕркелесе, контратакăсене кусать.

Совет тылĕ фронтпа таччăн ҫыхăнса тăрать. Ҫавăнпа тăшмана тĕп, йĕрпипех аркатса тăкма пирĕн вăй ҫителĕклех. Пĕтĕм совет халăхĕ тата эсир, манăн паттăр землякĕсем, хăвăр пархатарлă ĕҫпе пире вăйлăн пулăшса тăратăр. Эсир Хĕрлĕ Ҫар валли апат-ҫимĕҫ продукчĕсем тата тумтир ҫителĕклĕ парса тăратăр.

Совет ҫĕршывне хӳтĕлекенсен ҫирĕплĕхе, паттăрлăхе тата мухтавĕ ҫав тери пысăк. Ҫакăн пек геройла ĕҫсене пирĕн совет ҫыннисем кăна, хамăрăн ирĕклĕхе, чыса, никама пăхăнманлăха, тăван ҫĕршыв ӳссе чечекленессине пурнăҫа нимрен те мала хуракансем кăна тума пултараççĕ.

Тусăмсем, ылханлă тăшмана хирĕҫ эпир, совет воинĕсем, фронтра кĕрешетпĕр, эсир—тылри хĕрӳ ĕҫпе пирĕн ҫĕнтерĕве туптатăр. Пĕрлехи вăйпа Совет ҫĕршывне фашистла вăрă-хурахсенчен тасататăр! Пĕрлехи вăйпа тăван украинецсемпе белоруссене, Крым, Латви, Литва, Эстони, Бессараби халăхĕсене ирĕке кăларар!

Эпĕ фронтăн сулахай флангĕнче—Хура тинĕс флотĕнче ҫапăҫатăп. Хама шанса панă чи лайăх хĕҫпăшалпа ирсĕр фашистсене ҫĕмĕретĕп. Манăн «Илюша» тата манăн подразделенири паттăр ҫынсем ҫапăҫăва кайма яланах хатĕр тăраççĕ. Эпир ирсĕр ҫĕлен-калтасене кунĕн-ҫĕрĕн пĕтере-пĕтере тăкатпăр, вĕсене хамăр ҫĕр ҫинчен чĕррĕн кăларса ямастпăр.

Совет халăхĕ фашистла нимĕҫ захватчикĕсене хирĕҫ туса пыракан отечественнăй аслă вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуҫласах эпĕ фронтра тăван ҫĕршыв умĕнчи хамăн тивĕçе чыслăн пурнăҫлатăп. Севастополе геройла хӳтĕленĕ кунсем вăхăтĕнче эпĕ те фашистсен войскисене, самолечĕсене тата чĕрĕ вăйĕпе техникине чылай пĕтерсе тăкрăм. Мана тăшманăн «Ме—109—Ф» йышши 8 самолетне хирĕҫ кĕрешме тĕл килчĕ. Эпĕ тăшман самолечĕсен 16 атакине ҫирĕп хирĕҫ ярса, ҫапăҫуран ҫĕнтерӳҫĕ пулса тухрăм.

Вăрҫă пуҫланнăранпа эпĕ 268 боевой вĕҫев турăм, фашистсене 17 самолет, 19 танкпа танкетка, 500 автомашина, 29 орудии, 30 миномет, 300 лава яхăн тата вĕсен 3.000 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкрăм. Ку итога Хура Тинĕс Флочĕн Политуправленийĕ Хĕрлĕ Ҫар XXV ҫул тултарнă уяв тĕлне турĕ. Эпĕ унтанпа татах вунпилĕк боевой вылет турăм. Эпĕ малалла та вĕҫетĕп, ирсĕр нимĕҫсене хамăн чĕре тапма чарăниччен пĕтерсе пырăп.

Эсир тăван колхоза манăн ята панине пĕлсен, эпĕ питех те хумхантăм. Хаклă землякĕсем, ҫак пысăк шанăҫа хамăн малашнехи ĕҫпе тӳрре кăларăп, нимĕҫ захватчикĕсене юлашки юн тумламĕ юличчен пĕтерсе пырăп.

Колхозниксем, эсир те Верховный Главнокомандующи аслă Сталин хушнă пек ĕҫлĕр. Вара эпир фашистсене хăвăртрах аркатса тăкăпăр. Халĕ уйхир ĕҫĕсем пуҫланчĕҫ. Ялхуҫалăх ĕҫĕсене хăвăрт та пысăк пахалăхпа тăвăр, вăйлă тырпул никĕсне ăнăҫлă хывса хăварăр. Планран иртерсе туса илнĕ кашни килограмм тыр — тăшмана аркатмалли хăватлă бомба пулса тăрать. Хăвăрăн ĕҫсем ҫинчен тăтăшах пĕлтерсе тăрăр.

Совет Союзĕн Геройĕ гварди капитанĕ М. ЕФИМОВ.

Уйăп Мишши

САЛТАК ЮРРИ

Шавлă хуласем, сыв пулăр,
Сыв пулăр тӳлек ялсем.
Тăтăлса йĕрсе ан юлăр,
Тăвансем, хурăнташсем.

Савнисем, куҫҫуль ан тăкăр,
Шанăр эпĕр килессе.
Тантăшсем, салху ан пăхăр
Каяс ҫул инҫе, тесе.

Пирĕн ирĕк, хăхĕм пурнăҫ
Телейне таптас шутпа
Тапăнса-ҫке килчĕҫ урнă
Нимĕҫсем хĕҫпе, вутпа.

Ыхăрса хулийĕн-ялĕн
Ҫĕршыв ылханĕ-хĕрне
Тухма чĕнчĕ аслă Сталин
Юнлă ҫапăҫу хирне.

Тăшмана хирĕҫ каятпăр,
Пулас ҫук эпир чура.
Пурнăҫа ҫапса вататпăр
Мур пуҫне—ҫапăҫура.

Туссем, пуҫăра ан усăр,
Эпĕр вăй-хăватсăр мар.
«Таврăнмастпăр ҫĕнтерӳсĕр»:—
Чĕререн тупа тăвар.

Хуранса тăрса ан юлăр,
Савнă хуласем, ялсем.
Сывă пулăр та пур пулăр,
Тăвансем, хурăнташсем.

Савнисем, куҫҫуль ан тăкăр,
Чипер килĕҫ-ши тесе.
Каччăсене кĕтсе тăрăр,
Ҫĕнтерӳпе килессе!

Республикăри предприятисен производствăллă парнисем

Табак фабрики Май уявне апрель уйăхĕнчи плана 143,8 процент тултарнине кĕтсе илчĕ. Табак туракансен Маркина тата Семенцова юлташсен бригадисем апрельти программăна 2,5 хут ытларах тултарнă.

Уяв умĕнхи ăмăртура фабрикăра ҫĕнĕрен 8 стахановец палăрнă. Ĕҫ тухăҫлăхне ӳстерсе ĕҫлекенсен хисепĕ те чылай ӳснĕ. Табак тиштĕкен стахановкăсен Богданова юлташ апрель уйăхĕнчи плана 133 процент, Мишина — 131 процент, Будтор — 135 процент тултарнă.

Фабрика коллективĕ Май уявĕ умĕнхи ăмăртура тунă ҫитĕнӳсене ҫирĕплетсе май уйăхĕнче ҫур ҫулхи плана пурнăҫласси шĕн кĕрешет.

* * *

Апрелĕн 29-мĕшĕнче техно-ткацки фабрикăра Майăн 1-мĕшне уявлас ятпа чаплă лару пулса иртрĕ. Производство отделĕн начальникĕ А. Гельман юлташ чаплă ларура фабрика коллективĕн Май уявĕ умĕнхи ĕҫĕсем ҫинчен каларĕ.

— Апрель уйăхĕнче, — терĕ вăл, —пирĕн йывăр условисенче ĕҫлемелле пулчĕ. Апла пулин те пирĕн коллектив ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене пурнăҫларĕ. Плана 100 процентчĕпех тултартăмăр. Апрель уйăхĕнче лайăх ĕҫ тĕслĕхĕсене кăтартакан работниксемпе работницăсем вуншарăн хутшăнчĕҫ. Пир тĕртекенсем Алешева, Гудинова тата Андреева юлташсем плана 140 процент ытла тултарчĕҫ, браковщица Фиршель, утильцех работници Красницкая юлташсем планран иртерсе ĕҫлерĕҫ.

Фабрика апрель уйăхĕнче ĕҫҫыннисене куллен кирлĕ таварсем кăларас ĕҫе вăйлатнă, икĕ тĕрлĕ продукци ҫĕнĕрен кăларма тытăннă. Ҫапла вара апрель уйăхĕнче куллен кирлĕ таварсем 1.500 тенкĕлĕх ытла туса кăларнă. Ҫакă вăл илнĕ обязательствăсенчен ытларах туса кăларни пулать.

Ҫуракине 8 ĕҫкунĕнче туса иртерчĕҫ

ЕЛЧĔК, апрелĕн 30-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Ворошилов ячĕпе тăракан ялхуҫалăх артелĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем ҫуракинче фронтри пек ĕҫлерĕҫ. 8 ĕҫкунĕнче колхоз 387 гектар ҫине тĕштырăсем тата 70 гектар ҫине пăрса йышши культурăсем акрĕ. Кунсăр пуҫне Оборона фондне хывма тата нимĕҫ оккупанчĕсенчен сиен курнă колхозниксемпе колхозницăсене пулăшма колхоз ҫураки планĕнчен иртерсе 12 гектар тулă акрĕ.

Ҫуракине хăвăрт тата пысăк пахалăхпа туса иртерме социализмлă ăмăртăва анлăн сарни пулăшрĕ. Бригадăсем, звеносем, колхозниксем пурте ăмăртса ĕҫлерĕҫ. Ăмăртăвăн итогĕсене кашни виҫĕ кунта тĕрĕслесе тăчĕҫ. Ҫуракинче пурĕ 12 звено ĕҫлерĕ. Вĕсем хăйсене уйăрса панă участоксенче ĕҫе лайăх тата кĕске срокра тăвассишĕн кĕрешрĕҫ.

Ҫураки пынă вăхăтра бригадăсенчи стена хаҫачĕсене 22 номер, колхозăн стена хаҫатне икĕ номер кăларнă. Вĕсенче стахановла ĕҫлекенсен ĕҫ опытне сарса пынă, колхозниксене хăвăртрах та лайăхрах ĕҫлеме хавхалантарнă.

Нумай колхозниксем ҫуракинче кăтартуллăн ĕҫлерĕҫ.

В. Алексеев юлташ кашни кунах 1,30 гектар сухаласа пычĕ. Тырă акакансем Е. Волкова, Л. Курицин, В. Васильев юлташсем сеялкăсемпе кулленех 7—8-шер гектар тырă акрĕҫ. 1-мĕш бригадăри П. Иноходов, 4-мĕш бригадăри Ф. Смирнов юлташсем икĕ касăллă плугсемпе кулленех 1,25 гектар сухаланă.

С. Макаров,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Районри 5 колхоз сухри тырăсене акса пĕтерчĕҫ

ШАХАСАН, апрелĕн 30-мĕшĕ. **(Хамăр корр., телефонпа).** Ҫĕнĕ Мами ялсоветĕнчи «Красный партизан», «Активист», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем тата ҫĕнĕ Чалкасси ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем паян ҫурхи тырăсене акса пĕтерчĕҫ. Колхозсем ҫурхи сухана тăпра типсе пынă май уйрăм участоксене суйласа илсе тума тытăнса, малтанхи кунсенчех тырра сеялкăсемпе акса пырса, ҫураки ĕҫĕсене пысăк хăвăртлăхпа туса пычĕҫ. Ҫурхи тырăсене «Активист» колхоз 5 талăк хушшинче, «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз 4 талăк ҫурăра, «Красный партизан» колхоз 6 кун хушшинче акса хăварчĕҫ. Ҫĕртме туман вырăнсене пĕтĕм калăпăшĕпех 16—18 сантиметр сухаланă. сеялкăсемпе акнă.

В. Веселов.

Вулав ҫурчĕ ĕҫе тытăнчĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Ҫураки вăхăтĕнче агитациллĕ-массăллă ĕҫе анлăн туса пыма кирлине шута илсе, Нĕркечри халиччен хупă ларнă вулав ҫуртне уҫрĕҫ. Вулав ҫуртне йĕркеллĕ ĕҫлеттерес пирки ялсовет исполкомĕн председателĕ Сергеева юлташ хăй тăрăшса ĕҫлерĕ. Ҫуракине лайăх пахалăхпа тата большевикла хăвăртлăхпа туса иртерес ĕҫре вулав ҫурчĕ хăйĕн тивĕҫлĕ вырăнне йышăнĕ. Вулав ҫурчĕн пуҫлăхĕ пулма комсомолка А. Михайлова юлташа уйăрса лартнă. Вăл ҫураки вăхăтĕнче ĕҫлесе пыма план туса хунă. Справочное бюро организациленĕ. Вулав ҫурчĕ ертсе пынипе стена хаҫачĕсемпе бригадăсенчи боевой листоксем вăхăтра тухса тăраççĕ.

Н. Виноградов.

Пĕтĕм вăя Хĕрлĕ Ҫара пулăшма паратпăр

Ишлей районĕнчи колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем 1942 ялхуҫалăх ҫулĕнче тăван ҫĕршывпа фронт лартнă задачăсене ăнăҫлăн пурнăҫларĕҫ. Район 1942 ҫулта колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те иртерсе тултарчĕ. Ҫулталăк хушшинче майракаллă шултăра выльăхсен хисепне 52 процент, сыснасен хисепне 37 процент, качакасемпе сурăхсен хисепне 69 процент ӳстерсе социализмлă ăмăртура малти вырăна тухрĕ, хамăр республикăн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ ялавне илчĕ

Иртнĕ 1942 ҫулта доярка Минушкина юлташ («Самолет» колхоз) ĕнесенчен сĕт суса илес плана икĕ хут ытла тултарчĕ, хăй пăхакан ĕнесен пăрăвĕсене вăл пурне те лайăх пăхса ӳстерчĕ. Сысна пăхакан И. Полытов юлташ («Правда» колхоз) кашни ама сыснаран 14,8 ҫăвăр илсе пăхса ҫитĕнтернĕ. Ҫакăн пек тĕслĕхсем пирĕн районри колхозсенче нумай. Выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес ĕҫре 1942 ҫулта 139 колхозник ĕҫшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх натурăпа преми илнĕ.

Май умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса районри колхозсем ҫуракине лайăх хатĕрленсе тухрĕҫ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫре ҫĕнĕ ӳсĕмсем турĕҫ. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли кăҫалхи плана район пур йышши выльăхсем енĕпе те иртерсе тултарчĕ. 1943 ҫулти государство планне ĕнесем енĕпе 101 процент, сыснасем енĕпе —107 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе 111 процент пурнăҫа кĕртнĕ. Нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнипе лăпланса лармасăр, обществăллă выльăх-чĕрлĕхе планран иртерсе нумай ĕрчетме, фронтовиксен ҫемьисене пурне те ĕне, пăру парса пулăшма сăмах пачĕҫ.

Ҫакăнпа пĕрлех районри колхозсенче Ярославль облаҫĕнчи колхозниксен пуҫарăвĕ тăрăх оборона фончĕ валли тата нимĕҫ оккупанчĕсенчен сиен курнă колхозниксемпе колхозницăсене пулăшма ҫураки планĕнчен иртерсе тырпул акас, выльăх-чĕрлĕх уйăрса парас ĕҫ те анлăн сарăлчĕ. Пирĕн районри колхозсем кăҫал планран иртерсе 700 гектар тырă акса хăвараççĕ. Халĕ ҫураки ĕҫĕсем анлăн сарăлчĕҫ. Иртерех акмалли тĕштырăсене 1000 гектар ытла акнă та ĕнтĕ. Колхозниксем ҫуракине кĕске срокра туса иртерессишĕн тимлĕн ĕҫлеççĕ. Социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Нимĕҫ захватчикĕсене хамăрăн тăван ҫĕршывран хăвăртрах ҫапса кăларассишĕн кăҫал та ырми-канми ĕҫлĕпĕр, пĕтĕм вăя фронта пулăшнă ҫĕре хурăпăр.

Г. ХЕРСОНОВ,
Ишлей райсовет исполкомĕн председателĕ.

Пирĕн самолетсем Кенигсберг хулине тапăннă

Апрелĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле пирĕн самолетсен пысăк группи япăх ҫанталăк условийĕсенче Кенигсберг хули ҫине вĕҫсе пырса тапăннă. Кенигсбергри ҫарпа промышленность объекчĕсем ҫине фугаснăй тата вут хыптаракан бомбăсем пăрахнă. Пирĕн летчиксем вăйлă взрывсем пулнине тата вăйлă пушарсем тухнине сăнанă. Вут ҫулăмĕ 100 километртан курăнса тăнă.

Пирĕн самолетсем пурте, пĕр самолетсăр пусне, хăйсен базисене таврăннă.

Краснодартан хĕвеланăҫнерехри сывлăшри ҫапăҫусем

Апрелĕн 28-мĕшĕпе 29-мĕшĕнче нимĕҫ авиацийĕ Краснодартан хĕвеланăҫнерехре пирĕн войскăсемпе ҫар об"екчĕсене массăллăн пырса тапăнма хăтланнă. Пирĕн сывлăшри вăйсем вăл тапăнусене сирсе янă кăна мар, вĕсем тăшманăн войскисемпе ҫар об"екчĕсем ҫине хăйсем бомбăсем ăнăҫлăн пăрахнă. Пирĕн авиаци сывлăшра пуҫ пулса тăрса нимĕҫсене пысăк ҫухатусем кӳнĕ. Икĕ кун хушшинче сывлăшри ҫапăҫусенче нимĕҫсен 116 самолетне персе ӳкернĕ. Ҫав вăхăт хушшинче пирĕн 45 самолет пĕтнĕ.

Ют ҫĕршывсенче

ТУНИСРИ ВĂРҪĂ ĔҪĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англин саккăрмĕш армийĕн фронтĕнче патрульсем хастарлăн кĕрешнĕ. Англин пĕрремĕш армийĕн фронтĕнче Меджез—Эль-Бабран ҫурҫĕр--хĕвелтухăҫнерехре хаяр ҫапăҫусем пулса пынă. Англин войскисем пăртак малалла куҫнă пулнă, анчах тăшман икĕ хут вăйлă контратака тунă. Пирвайхи контратакăна тăшмана пысăк ҫухатусем кӳрсе сирсе пăрахнă. Иккĕмĕш хут контратака тунă хыççăн Англин войскисен малти чаҫĕсем пăртак каялла чакнă. Кăнтăрта француз чаҫĕсем вырăнти ҫапăҫусенче ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем тунă. Ҫурҫĕрте американецсен иккĕмĕш корпусĕ татах малалла куҫнă, темиҫе паха позицие йышăнса илнĕ.

Америка авиацийĕ ĕнер Неапольри доксене тата Месинăри (Сицилия) гаване тапăннă. Месинăра бомбăсем пăрахнипе чугунҫул объекчĕсене тата портри чылай сооруженисене сиенленĕ. Неапольри доксене те чылай сиен кӳнĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ВИЛЬГЕЛЬМСХАФЕНА ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле бомбардировочнăй авиацин самолечĕсем тăшман шывĕсем ҫине минăсем лартса тухнă. Англи бомбардировщикĕсем Вильгельмсхафен ҫине вĕҫсе пырса тапăннă. 23 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман.

НИМĔҪ ҪАМРĂКĔСЕМ ĂС-ТĂН ЕНЧЕН КАЯЛЛА ЧАКСА ПЫРАҪҪĔ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). „Кельнише Цейтунг" ятлă гитлерла хаҫат нимĕҫ ҫамрăкĕсем культура енчен питĕ нумай каялла чакнине йышăнать. „Хальхи ăру,—ҫырать хаҫат,—хăйĕн ăс-тăнне ватă ăрăвăн опычĕпе, йăлисемпе пуянлатмасть. Ҫавăн пирки те вара ҫамрăксен ăс-тăн анлăшĕ хĕсĕннĕ, чунĕ хытса ларнă, чĕлхи чухăнланнă, вĕсем пĕр вĕреннĕ пуплевсене ҫеç калаççĕ.

Нимĕҫсен „Милитер Вохенблат" ятлă ҫар журналĕ ҫамрăк офицерсен культури япăх пулнипе ӳпкелешет. „Аттестат зрелости илнĕ юнкерсем логикăллă шухăшлама пĕлменнинчен тĕлĕнсех каймалла, тесе ҫырать журнал.—Нумайĕшĕн пуҫĕнче пăтранчăк шухăшсем ҫеç. Вĕсем мĕн те пулин ҫырма пуҫласан, малтан мĕн ҫырнине кайран хăйсемех ним шутламасăрах хирĕҫлесе ҫыраççĕ. Юлашки вăхăтра вĕрентсе кăларнă ҫамрăк офицерсем пĕр содержанисĕр сăмахсем ҫаптарма юратнинчен тĕлĕнмелле. Вĕсем пĕр шухăш каласа памасăрах темĕн чухлĕ ҫырма пултараççĕ" тет журнал.

„Гамбургер Тагеблат" хаҫат та нимĕҫ ҫамрăкĕсем питĕ сахал пĕлнине тата вĕсем ăс-тăн енчен каялла чакса пынине йышăнать. Хаҫат пĕлтернĕ тăрăх, пĕр экзаменра экзамен тытакансенчен ҫурри нимĕҫсен паллă поэчĕ Гете хушаматне тĕрĕс ҫырма пултарайман.

СЛОВАКИРЕ ГЕРМАНИЕ ХИРĔҪЛЕ ШУХĂШ-КĂМĂЛСЕМ ӲСЕҪҪĔ

СТАМБУЛ, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Германие хирĕҫле шухăш-кăмăллă ҫынсене шыраса, Братиславăра гестапо пур ҫĕрте те ухтарусем тăвать, ҫынсене массăллăн арестлет.

Нумаях пулмасть фашистла парти членĕсен пĕр канашлăвĕнче Словакин пуканелле «президенчĕ» Тисо—«Словаки тылĕ фронт пулса тăчĕ», тесе йышăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СИРĔН ТУСĂРСЕМ, ЫВĂЛĂРСЕМПЕ ТĂВАНĂРСЕМ

Иртнĕ ҫуллахи тата кĕрхи кунсем пирĕншĕн ҫав тери йывăр кунсем, хаяр кунсем пулчĕҫ. Унчухне нимĕҫ вутпа вилĕм сарса пирĕн Атăл ҫинчи гранит пек ҫирĕп тĕреклĕх патне—Сталинград патне ҫитрĕ. Сталинграда ҫĕнтерсен, нимĕҫ Атăл ҫыранĕпе хăпарса, пирĕн чăваш халăхĕн сĕткенлĕ уй-хирĕсем тăрăх, пирĕн чечекленекен Шупашкар витĕр тухса, чăваш халăхĕн тар юхтарса пухнă мĕнпур пурлăхне вутпа ҫунтарса, ҫаратса, хĕвелтухăҫĕнчен кайса ҫĕршыв столици—Мускав патне пыма, ăна пирĕн алăран туртса илме хапсăнчĕ.

Ҫав кунсем пирĕншĕн нихăҫанхинчен те хăрушă тата йывăр кунсем пулчĕҫ. Анчах эпир чăтрăмăр. Нимĕҫ пирĕн ҫирĕплĕхе аваймарĕ. Сталинград, пирĕн юратнă хула ҫĕмĕрĕлсе ванчĕ, ҫапах та унăн хăвачĕ нимĕҫсен танкĕсенчен, бомбисенчен, снарячĕсенчен тĕреклĕрех, ҫирĕпрех пулчĕ.

Нимĕҫ мар, эпир нимĕҫе пĕкĕ авнă пек аврăмăр. Эпир тӳссе чăтрăмăр, нимĕҫ тӳсеймерĕ. Тăшман хăйĕн ҫĕршер пин вилĕ салтакĕсене ҫеҫен хирсем тăрăх сапаласа тарма хăтланчĕ, тараймарĕ. Сталинград нимĕҫсене пит те хакла ларчĕ. Кунта тăшман хăйĕн халичченхи вăйне яланлăхах ҫухатрĕ. Хĕрлĕ Ҫар хĕртсе ҫирĕплетнĕ кăшăлпа савăрса илчĕ тăшмана. Ҫав кăшăлпа виҫҫĕр вăтăр пин нимĕҫе пирĕн ҫар лутăркарĕ, ҫĕмĕрчĕ, аркатрĕ.

Инҫетри Ҫурҫĕртен пуҫласа Кăнтăра ҫити тăсăлса выртакан фронтра—пур ҫĕрте те, ытти тăван халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле, чăваш халăх ывăлĕсем те тăван ҫĕршывшăн, ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн паттăррăн ҫапăҫаççĕ. Максим Титов Сталинград патĕнче ҫапăҫнă чух, унăн тусĕсем, унпа пĕрле пĕр ҫуртра ĕҫленĕ, кун-каҫсене пĕрле иртернĕ тусĕсем: Федор Шашков—Ржевпа Вязьма патĕнче, Мирон Романов—Ҫурҫĕрте, Трофим Майоров—Хĕвеланăҫ фронтĕнче ҫапăҫрĕҫ. Пирĕн фронтра чăваш халăх ывăлĕсем Фурасев, Васильев, Зогин, Григорьев, Харитонов, Лаптев, Смирнов, Иванов тата ытти темиҫе вуншар ҫамрăксем хăйсен хăюлăхĕпе, паттăрлăхĕпе, шиксĕрлĕхĕпе пирĕн Хĕрлĕ Ҫарăн вăй-хăватне ҫĕклеççĕ, тăван ҫĕршыв валли чаплă ҫĕнтерӳ хатĕрлеççĕ.

Пулеметчик-сержант Федор Николаев пĕр пĕччен ҫитмĕл ытла нимĕҫе вĕлернĕ, Юлашки ҫапăҫура хăйĕн пулемечĕпе гитлеровецсен ротин ҫуррине тураса тăкнă. Вăл хаяр ҫапăҫура паттăр вилĕмпе вилчĕ, анчах пĕр утăм та каялла чакмарĕ.

Чăваш халăхĕ хăйĕн ывăл-хĕрĕсемпе мухтанма пултарать. Пит те паттăр, пит те хăюллă, пит те пысăк чыса тивĕҫлĕ ҫамрăксене пăхса ӳстерчĕ пирĕн халăх, пирĕн парти.

Вулавçă юлташăм, пĕлсем: тен Илья Мимеров санăн тусу, тен вăл санăн шăлну е упăшку, е ывăлу; вăл санăн чĕрери кăвар пек юратăвна тивĕҫ. Унăн кăкăрне тăван ҫĕршыв Хĕрлĕ Ҫăлтăр орденĕпе илемлетрĕ. Илья Мимеров—хăюллă, пысăк ăс-тăнлă, ҫав тери хăрсăр командир. Вăл вĕрентсе хатĕрленĕ, вăл ертсе пынипе кунĕн-ҫĕрĕн хастарлăн ҫапăҫакан боецсем тупăран персе ҫичҫĕр ытла нимĕҫе вĕлернĕ, тăшманăн боеприпассем тиенĕ хĕрĕх ытла лавĕпе автомашинине, нимĕҫсен 15 орудийĕпе миноменетне тата икĕ танкне, гитлеровецсен 60 блиндажĕпе землянкине сирпĕнтерсе аркатса тăкнă.

Тен эсир С. Тулпанов юлташа астăватăр пулĕ. Вăл кунта, сывă, лайăх ҫапăҫать. Вăл миномет расчечĕн командирĕ. Нимĕҫсене хĕрхенмест, мĕн вăй ҫитнĕ таран гитлеровецсене ытларах та ытларах вĕлерет. Ҫĕр ытла нимĕҫе вĕлернĕ унăн пит те тĕл ӳксе ҫурăлакан минисем.

Боец Д. Коротков — сывăхри ҫапăҫу мастерĕ. Вăл нимĕҫсене штыкпа чиксе е прикладпа ҫапса вĕлерме пит те лайăх ăсталанса ҫитрĕ ĕнтĕ. Д. Коротков ҫав тери харсăр воин. Нумаях пулмасть вăл хăйĕн юлташĕпе пĕрле чылай нимĕҫсене чике-чике вĕлернĕ, пилĕк нимĕҫе тыткăна илнĕ.

Чăрăшҫырмари (Вăрмар районĕ) хĕрупраççем Мария Леонтьевăна астăваççĕ пулĕ. Вăл вăрçă пуҫлансан тепĕр кунне Хусантан фронта тухса кайнă. Сахал мар вăл снарядсемпе минăсем ҫурăлнă ҫĕрте, пульăсем ҫăмăр пек тăкăннă ҫĕрте пулнă. Сахал мар вăл боецсене вилĕмрен ҫăлнă. Пĕррехинче госпитале питĕ йывăр аманнă боеца — Черевиченкăна илсе пынă. Унта Мария Леонтьева пулнă. Боецăн пурнăҫĕ вĕҫленсе пынă, унăн ӳт-пĕвĕнчен юлашки юн тумламĕсем юхнă, унăн чĕри вăйсăрланнă-ҫемĕн вăйсăрланнă. Мария Леонтьева хăйĕн 250 грамм юнне парса, боеца вилĕмрен ҫăлса хăварнă. Унсăр пуҫне тепĕр боец валли 300 грамм юн панă вăл.

Вулакан юлташсем! Ҫапла кĕрешеççĕ санăн фронтри тусусем, санăн тăванусемпе ывăлусем. Сирĕн телейĕрпе савăнăҫăра тата сирĕн ирĕклĕ те пархатарлă ĕҫĕре сыхласа усрассишĕн, сирĕн пурнăҫăрпа пуласлăхăршăн!

Вулакан юлташăм! Тен эсир Федор Николаевпа пĕрле пĕр станок патĕнче ĕҫленĕ; тен эсир Николай Корольковпа пĕрле виҫĕм ҫул паянхи кун Атăл лешъенче, савăнса юрланă; тен эсир Илья Мимеровпа пĕрле пĕр колхозра ĕҫлесе, вăйлă тырпулшăн кĕрешнĕ: тен эсир Мария Леонтьевăпа пĕрле пĕр больницăра пулса, пирĕн халăх сывлăхне упранă; теп эсир Дмитрий Коротковпа пĕрле пĕр фермăра пулса, нумай йышлă тата пысăк тухăҫлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешнĕ: тен эсир Семен Тулпановпа пĕрле пĕр шкулта вĕренсе инженер е врач пулма хатĕрленнĕ. Кирек ăҫта пулнă пулсан та, эсир ĕҫре пиҫĕхсе ӳснĕ, пĕр ҫемьери пек ҫитĕннĕ. Апла пулсан, пĕлсем: вĕсем тăван ҫĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕҫне паттăррăн пурнăҫа кĕртеççĕ, тăван ҫĕршывшăн, тăван халăхшăн, тăван аслă Сталиншăн хăйсен пурнăҫне шеллемесĕр кĕрешеççĕ.

Фронтовиксен паттăрла ĕҫĕ—сире, сирĕн ĕҫ—пире, фронтовиксене, хавхалантартăр. Фронта танксем, самолетсем, орудисем, апат-ҫимĕҫсем, тумтир татах та ытларах парассишĕн кашни ҫын—ватти те, ҫамрăкки те, пурте пĕр кăмăллăн пулса ырми-канми кĕрешчĕр.

СССР Совнаркомĕ пирĕн республикăна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕҫленĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш премине пама йышăнни ҫинчен эпир те пĕлтĕмĕр. Ку хыпар сирĕнпе пĕрле пире те ҫав тери хĕпĕртеттерсе хавхалантарать. Эпир сире—тылри воинсене хĕрӳллĕн саламлатпăр.

Капитан **М. ЯКИМОВ.**

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуҫалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

ПТ 1039 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.